# КАШКĂР МИКУЛИ – ЧĂВАШСЕН ПАЛЛĂ ЮМАХÇИ ТАТА ЮРĂÇИ

**2006 çулта республикăра Кашкăр Микули çуралнăранпа 125 çул çитнине уявларĕç. Юбиляра халалласа тĕрлĕ мероприятисем ирттерчĕç. Сăмахран, чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ наукăпа практика конференцине йĕркелерĕ. Паллă юрăçă-юмахçăн пултарулăхне тĕрлĕ енлĕн тишкерчĕç унта, хакларĕç. Конференцире каласнă хăшпĕр шухăшсемпе паллаштарăпăр паян.**

Кирек мĕнле халăх та сăмах ăстисемпе пуян. Ĕмĕрсем-ĕмĕрсем хушшинче вĕсем те майĕпен уйрăм жанрсемпе ĕçленине палăртмалла. Çапла майпа пĕрисене, юмах калама – хывма юратнăран, юмахçă тенĕ, теприсене – юрăçă, виççĕмĕшсене, тĕрлĕ чир-чĕртен, усал-тĕселрен сыватма е юмлама пултарнăран, юмçă-эмелçĕ ятпа хисепленĕ т. ыт. те. Куратпăр: чăвашсем мĕн авалтанах юрăçă-такмакçăсемпе, шăпăрçă-купăссăсемпе, юмахçă-халапçăсемпе, ташăçă-вăйăçăсемпе тата чĕлхеçĕ-вĕрӳçĕсемпе пуян пулнă, сахал пулсан та паян та çакнашкал сăмахçăсемпе ăстаçăсем тĕл пулаççĕ-ха.

Кашкăр Микули – çав ăстасенчен чи курăмли. Вăл – тăван халăхăмăрăн паллă юмахçи, юрăçи, çыравçи тата сăмахлăх пухаканĕ.

Сăмахран, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăçлăлăх архивĕнче /ЧПГĂИĕн ĂА/ ăстаçă 1938 ç. хăй аллипе çырнă хут упранать. Ку – халăх юрăçисемпе юмахçисене шута илмелли анкета. Автор, мĕнле жанрсемпе ĕçленине кăтартакан ыйту çине, тӳрех хăйне «юмахçă» /сказочник/ тата «юрăçă» /певец/ тесе палăртнă.

Волков Николай Григорьевич /Кашкăр Микули/ Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва учесĕнчи Аслă Çĕрпӳел – халĕ Комсомольски районĕ – чухăн хресчен кил-йышĕнче 1881 çулхи çу уйăхĕн 15 /3/-мĕшĕнче çуралнă. Тĕрлĕ сăлтавсене пула унăн шкула çӳреме май килмен. Акă, мĕнлерех çырать вăл ун пирки: «Эпĕ 1881 çулта çу уйăхĕн 3 числинче /кивĕ стильпе – В.Е./ çуралнă. Эпĕ 11 çула çитсен, 1892 çулта манăн тăван атте Григорий Герасимов вилсе мана тăлăха хăварчĕ. Вăл мана хăй вилес умĕн каларĕ: эпĕ... сана пехиллĕх паратăп! Эпĕ хута вĕренмесĕрех вилетĕп. Эсĕ хута вĕренме тăрăш, аслă çынсемпе паллашма тăрăш. Çын япалине ан вăрла, çын япалине çĕртен тупсан та, кам япали иккенне пĕлсен, хăйне пар; эсĕ унпа пуйăймăн»,– терĕ /ЧПГĂИĕн ĂА, 1 пай, 138 том, 4406 инв. №, 290 с./.

Ашшĕ пехилне Николай Григорьевич мĕн виличчен ăшра тытнă: тăван ялĕнче шкул пулманнипе 2 эрне хушши Тăрăна, 15 пус укçа тӳлесе, Дмитрий Иванович Дьякон хăй укçипе уçнă шкула çӳрет, анчах тăлăх пирки вĕренме пăрахать. Çапах та пĕлӳ илес туртăмлă Микулай хăйне хăй вĕренсе икĕ çул хушшинче çырма, вулама хăнăхать.

Каярахри пурнăçĕ тĕрлĕ ĕçсемпе çыхăннă унăн: чиркӳ хуралçире, шахтăра, патша çарĕнче, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пулнă. 1918 ç. тăван ялне таврăнать те ял Совет секретарĕнче ĕçлеме пуçлать, выçлăх çулĕсенче Чернигов хулинче ача çуртĕнче, стройкăра, шкулта вăй хурать. 1934 ç. Кашкăр Микулин хăлхи сусăрланать, илтми пулать. Çакăн хыççăн вăл халăх сăмахлăхне пухма пикенет, хăй те юмахсем, сăвăсем çырать, пичетлесе кăларать. Çак пархатарлă ĕçре Н.Г.Волкова чăваш çыравçисемпе тĕпчевçисем, фольклорисчĕсем хавхалантарса пыни паллă. Акă, мĕн пĕлтерет паллă юмахçă 1941 çулхи августăн 14-мĕшĕнче И.С.Тукташ патне çырнă пĕр çырăвĕнче: «Аслă хисеплĕ юлташ И.Тукташ! Эпĕ Сире хисеплĕ салам ярап! Тата Ивнике, Ар. Лукича, Ястрана салам калăр. Аслă Тукташ, эпĕ Сирĕн çырăва илтĕм, уншăн сире тав тăватăп! Тата ĕçӳсем юрăхлă пулаççĕ тенĕшĕн эпĕ пĕртак хавасланап. Анчах та! Мана та хальхи вăхăтра çырма пăртак чарăнса тăмалла пулать. Мĕншĕн тесен вăхăтлăха 1–2 уйăх хушшине трудовой фронта йĕтем çине сыхлама куçрăм, ĕç вăйĕ сахалтарах пирки мĕн чул пулсан та колхоза пулăшас терĕм. Çапах та хам вăй çитнĕ таран мĕн чул та пулсан пушăрах вăхăт тупăннă вăхăтра пăртак та пулсан çыркалăп халĕ эпĕ» /ЧПГĂИĕн ĂА 1 пай, 143 том, 4461 инв. №, 47 с./.

Паянхи кун Кашкăр Микулин чылай юрри-сăвви, юмах-халапĕ кун çути курчĕ те ĕнтĕ. Пурпĕрех ЧПГĂИĕн архивĕнче пичетленмен 40 яхăн юмахĕ, 500-ре яхăн юррипе такмакĕ, 326 тупмалли юмахĕ тата çырусăр сăмахлăхăн шута илмен нумай-нумай тĕсĕсем упранаççĕ.

Чăваш фольклорĕн тĕрлĕ жанрĕсене пухнисĕр пуçне Кашкăр Микули хăй те çине-çинех хайлавсем калăпларĕ, чăннипех тăван халăхăмăрăн асĕнче сăмах ăсти пулса юлчĕ. Унăн çырас туртăмĕ 30-мĕш çулсенче палăрнă: чи малтанах виçĕ сăвви 1936 ç. «Сунталта», вăрçă çулĕсенче «Илемлĕ литература» журналта пичетленнĕ. Унсăр пуçне вăл хайланă произведенисем «Фашизма хирĕç фольклор» /1941ç./ сборникра, тĕрлĕрен хрестоматисенче, фольклор пуххисенче тата вĕренӳ пособийĕсенче кун çути курчĕç. Паллă юмахçăн хайлавĕсем хăй пурăннă вăхăтра ятарлăн пичетленмен, 1947 ç. çеç уйрăм кĕнекен «Кашкăр Микули. Сăвăсемпе юмахсем» ятпа çапăнса тухнă.

Чăннипе каласан, Н.Г.Волков пултарулăхĕ – нумай енлĕ те хăйне евĕрлĕ. Çак уйрăмлăха палăртса, Илле Тукташ ун пирки çапларах каланăччĕ: «Чăвашсен паллă юмахçисемпе юрăçисем хушшинче Кашкăр Микули – чи сумлă вырăнта. Чылай ăстаçă хăйсен репертуарĕнчи çирĕпленсе çитнĕ традицилле юмах-халапа ламранлама ним улăштармасăр каласа хăварать пулсан, Кашкăр Микули вара, вĕсемпе танлаштарсан, авалхи халăх пултарулăхĕн еткерне çĕнĕ витĕм кӳрекен тата паянхи куна тивĕçтерекен е сăнарлакан хăйне евĕрлĕ илемлĕх мелĕсене анлă аталантарма пултаракан ăста юмахçă тата маçтăр-импровизатор шутланать» /ЧПГĂИĕн, ĂА, 3 пай, 18 том, «Отзыв», 1 с./.

Кашкăр Микули уйрăмах Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тухăçлă ĕçленине палăртмалла. 1941–1945 çç. çырăннă паллăрах хайлавĕсен шутне «Фюрерăн хӳри татăлнă», «Суккăр пăван», «Хĕвел ывăлĕ», «Ваньккан пултарулăхĕ», «Тăлăх Тимахви» юмахсем, «Çĕр ĕçлекен Ехрем», «Армянпа вырăс», «Ӳсĕр çын», «Наянпа кахал» мĕсексем /анекдотсем/, «Тĕп пултăр фашист!» «Çĕнĕ гимн», «Атăл», «Çĕнтерӳ юррисем», «Пирĕн çĕнтерӳ» сăвăсемпе юрăсем, вуншар-çĕршер вак жанрсен тĕслĕхĕсем кĕреççĕ.

Асăннă хайлавсенче юмахçă фольклорти сăнарсене, сюжетсене тата мотивсене пĕлсе усă курнă. Сăмахран, «Фюрерăн хӳри татăлнă» хайлавра вырăс халăхĕн «Вакă умĕнчи кашкăр» /Андр., 2/ юмах сюжечĕ тĕп вырăнта. Кашкăр Микулин юмахĕнчи «тискер те сĕлекеллĕ чĕр чунĕ» – Гитлера, фюрер пăрлă шывра хӳре татни – нимĕçсен çарне Сталинград патĕнче çĕнтернине сăнарлаççĕ. «Ваньккан пултарулăхĕ» юмахра, ав, кăтартмăшри тĕрлĕ сюжет ӳкерĕннĕ: чее ăсталăх /Андр., 325/, чĕр чунсен чĕлхи /Андр., 670/, Вилĕмсĕр Кащей /Андр., 302/, паллаштарман тĕлĕк /Андр., 725/. Вĕсен çумне автор хăй шутласа кăларнă мотивсене хушать: сăмах-юмах совет тапхăрĕнче çуралса çирĕпленнĕ ĕç-пулăмсене сăнарлать; тĕп герой унивеситетра пĕлӳ илет; революци пулса иртет; Ванькка тĕрлĕ техникăпа ĕçлеме вĕренет; тăван çĕрне пур тăшманран маттуррăн сыхлать. Ахальтен мар, юмахçă хайлавне «Хĕрлĕ Çара каймалла пулсан, манăн та Ванькка пек паттăр пуласчĕ»,– тесе вĕçлет.

Указательте çырăнман сюжетсене те шутласа кăларать юмахçă. Тĕслĕхрен, «Хĕвел ывăлĕ» юмах. Кунти тĕп герой – Алмаз паттăр. Вăл – Хĕвел амăшĕн иккĕмĕш ывăлĕ; ăна Çĕр çинчи Хĕвел пулмашкăн çуратнă, анчах тĕрлĕ çĕлен-калтасем Хĕвел амăшне чирлеттерсе ачине вăхăтсăрах çураттараççĕ; çавна пула пулас иккĕмĕш Хĕвел çуралсанах çĕре ӳкет, çын сăнарне илет: хăвăрт ӳсет, паттăрла ĕçсем тăвать, нумай пуçлă çĕленпе çапăçать, халăха тăшмансенчен сыхлать; ăна çĕнĕ патшалăхăн ертӳçине суйлаççĕ; çапла майпа, Хĕвел сăнарлă пулса, пур халăха та ăшăтса, çутатса тăма пуçлать.

Н.Г.Волков хайланă сăвăсем те ăнăçлă пулса тухнă теме юрать. Тĕслĕх вырăнне илер-ха «Тĕп пултăр фашист» хайлавне. Унăн тĕп шухăшĕ – çĕр çинчен фашистсене тĕпĕ-йĕрĕпех тасатмалла. Автор халăх сăввин формипе, илемлĕх мелĕсемпе вырăнлă усă курни произведенине витĕмлĕрех те сумлăрх тăвать, пахалăхне ӳстерет. Автор шухăшлавĕ градаци /ӳссе пыни/ меслечĕпе тĕвĕленнĕ: вăл фашистсене чи малтан «уран», «алран», «сăмсаран», «пуçран» çапма, кайран «хырăмран», «чĕререн» чикме, юлашкинчен «вутпа çунтарма» «кĕлне çилпе вĕçтерме» хушать. Çапла тусан çеç фашист çĕр çинчен çухалма пултарать. Куратпăр: ку кĕвĕ чăваш халăх юмахĕсенче, тĕрлĕрен магилле сăмахлăхра анлă сарăлнă. «Сĕлекеллĕ çĕлен», «Пухрĕ Геббельс громофон», «Комсомол», «Юлташ Сталин», «1 Май» тата ытти сăввисем те халăх юррисене çывăх.

Н.Г.Волков /Кашкăр Микули/ пултарулăхĕпе паллашсан, çапларах пĕтĕмлетӳсем тума пулать. Пĕрремĕшĕ. Вăл – халăх сăмахлăхĕн тĕрлĕ жанрĕсене пухаканĕ, упраканĕ, вĕсене çитес ăрусем валли сыхласа хăвараканĕ. Иккĕмĕшĕ. Кашкăр Микули – çĕнĕ сăвă-юрă, юмах-халапĕ хываканĕ, халăх хушшинче сараканĕ, чăваш халăхĕн паллă юмахçипе юрăçи. Фольклорăн тĕрлĕ мелĕсемпе тата меслечĕсемпе, традицилле жанр тĕслĕхĕсемпе пĕлсе те анлă усă курать вăл, çав вăхăтрах хăй çырнă хайлавсене çĕнĕ шухăшпа, кĕвĕпе, сюжетсемпе пуянлататать, киввине, хăй ăнлавĕпе тата тавракурăмĕпе килĕшӳллĕн çĕннипе улăштарать е хушать, е çĕнĕлле йĕркелет. Асăннă хайлавсенче халăх идеалĕ авторăннипе тӳр килет: фольклорти шухăшлав та, автор ăнĕ те пĕр шайрах тăнине асăрхатпăр эпир; вĕсем пĕр-пĕрне хирĕçлемесĕр автор калас тенине /авторлăха/ палăртаççĕ.

**В.ЕНДЕРОВ,**
**Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн аслă наука сотрудникĕ, филологи кандидачĕ.**